Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи майӑн 5-мӗшӗнчепе тухать

94 (7734) № ✻ Юн кун, 2009 ҫулхи ноябрӗн (чӳк) 25-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

Районти вӗрентӳ учрежденийӗсенче

## Ҫӗнӗ технологисене ҫул параҫҫӗ



***Эсир сӑн ӳкерчӗкре куракан Сергей Георгиевич Вастеевӑн учитель стажӗ чӗрӗк ӗмӗр ытла. Хӑй вӑхӑтӗнче Чӑваш ял хуҫалӑх институчӗн механика факультетне ӑнӑҫлӑ вӗренсе тухнӑскер, ӗҫ ӗмӗрӗн ытларах пайне ачасене информатикӑна вӗрентессине халалланӑ.***

***– Унсӑрӑн пирӗн пурнӑҫ ҫук. Ачасем те Сергей Георгиевича питӗ кӗтеҫҫӗ, унӑн урокӗсене хапӑл туса тулли кӑмӑлпа ҫӳреҫҫӗ, – каласа парать Шурчари пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан тӗп шкул директорӗ С. Троицкая.***

***С. Вастеев пӗр вӑхӑтрах Ярапайкассинчи вӑтам шкулта та, Шурчара та ӗлкӗрсе пырать. Компьютерсем юсасси, картриджсем тултарасси, учительсене компьютерсем кӗртсе парса вӗсене Интернетпа ҫыхӑнма пулӑшасси т. ыт. те – ӑйӑлтах кунта Сергей Георгиевичӑн тивӗҫӗ.***

***– Ачасем компьютерпа ӗҫлеме вӗренесшӗн. Ҫӗнӗлӗхсене вӗсем хӑвӑрт алла илеҫҫӗ, – терӗ Сергей Георгиевич черетлӗ урока пуҫлама май.***

**А. БЕЛОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.**

Вунӑ уйӑх итогӗсем

## Ял хуҫалӑхӗ: ӳсен-тӑран отраслӗ

Ҫулталӑк пуҫланнӑранпа ял хуҫалӑх предприятийӗсенче пӗтӗмпе 484478 пин тенкӗлӗх продукци туса илнӗ тата тиесе ӑсатнӑ. Ку вӑл, иртнӗ ҫулхи ҫав вӑхӑтрипе танлаштарсан, 104,7 процент пулать.

Тӗш тырӑ культурисене пӗтӗмпе 34,7 пин тонна (114,4 процент) пухса кӗртнӗ. Иртнӗ ҫул ку кӑтарту 30,33 пин тоннӑпа танлашнӑччӗ. Ял хуҫалӑх предприятийӗсенче тӑш тырӑна 25,7 пин тонна (101,6 процент), уйрӑм ҫынсен хушма хуҫалӑхӗсенче 4,3 пин тонна (237,6 процент), хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсенче 4,7 пин тонна (146 процент) пуҫтарса илнӗ.

Ҫӗр улмине те 57,9 пин тонна е иртнӗ ҫулхинчен 3,6 процент ытларах кӑларса пухнӑ. Ял хуҫалӑх предприятийӗсенче вара «иккӗмӗш ҫӑкӑра» туса илесси чакнӑ. Унччен ӑна 14,2 пин тонна туса илнӗ пулсан, кӑҫал – 13,5 пин тонна. Уйрӑм ҫынсен хушма хуҫалӑхӗсенче ҫӗр улмине 38,9 пин тонна (101,8 процент), хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсенче 5,5 пин тонна (157,1 процент) пухса илнӗ.

Тӗш тырӑ культурисен вӑтам тухӑҫӗ гектар пуҫне 23,9 центнерпа танлашнӑ (107,7 процент). Ял хуҫалӑх предприятийӗсенче вӑл 25,5 центнер (113,8 процент), уйрӑм ҫынсен хушма хуҫалӑхӗсенче 22,2 центнер (85,4 процент), хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсенче19 центнер (99,5 процент) пулнӑ.

Ҫӗр улми тухӑҫӗ кӑҫал кашни гектар пуҫне вӑтамран 163,6 центнер пулнӑ е пӗлтӗрхинчен 9,9 процент пӗчӗкрех. Ял хуҫалӑх предприятийӗсенче ҫак кӑтарту 125,6 центнер (72,9 процент), уйрӑм ҫынсен хушма хуҫалӑхӗсенче 193 центнер (102 процент), хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсенче 122,3 центнер (82,5 процент).

Кӗскен

## Граждансене йышӑнать

2009 ҫулхи ноябрӗн 26-мӗшӗнче 13 сехетрен тытӑнса Муркаш район прокуратурин ҫуртӗнче (Муркаш ялӗ, Мир урамӗ, 6 «А» ҫурт) граждансене Чӑваш Республикин прокурорӗн ҫумӗ А.И. Григорьев йышӑнать.

Состоялись публичные слушания

## Проект бюджета одобрен

20 ноября 2009 года состоялись публичные слушания по проекту решения Моргаушского районного Собрания депутатов «О районном бюджете Моргаушского района на 2010 год».

Проведены они в соответствии с постановлением главы Моргаушского района от 5 ноября 2009 года № 672. Проект решения районного Собрания депутатов «О районном бюджете Моргаушского района на 2010 год» был опубликован в газете «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» 11 ноября 2009 года.

Участники приняли следующие рекомендации:

1. Одобрить проект бюджета Моргаушского района на 2010 год.

2. Рекомендовать Моргаушскому районному Собранию депутатов принять проект бюджета Моргаушского района на 2010 год в установленном порядке в соответствии с требованиями законодательства Российской Федерации и Чувашской Республики.

Пирӗн интервью

## Тивӗҫлисене патшалӑх пулӑшать

***Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗн 2008 ҫулхи декабрӗн 11-мӗшӗнчи 379-мӗш номерлӗ йышӑнӑвӗпе килӗшӳллӗн кӑҫалхи январӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа граждансен уйрӑм категорийӗсене пурӑнмалли хваттершӗн тата коммуналлӑ пулӑшусемшӗн уйӑхсерен укҫан тӳлев парса тӑраҫҫӗ. Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗн кӑҫалхи августӑн 19-мӗшӗнчи йышӑнӑвӗпе килӗшӳллӗн вара маларах асӑннӑ йышӑнӑва улшӑнусем кӗртнӗ. Мӗнлерех улшӑнусем вӗсем? Ҫакӑн ҫинчен тӗплӗнрех каласа пама ыйтрӑм та ӗнтӗ эпӗ Чӑваш Республикин Сывлӑх сыхлавӗн тата социаллӑ аталану министерствин пирӗн районти социаллӑ хӳтлӗх пайӗн тӗп специалист-экспертне С.Л. СКВОРЦОВАНА.***

– Асӑннӑ улшӑнусем граждансен уйрӑм категорийӗсен ҫемье членӗсене пурӑнмалли пӳлӗмшӗн тата коммуналлӑ пулӑшусемшӗн уйӑхсерен укҫан тӳлев парассине пырса тивеҫҫӗ. Ҫак улшӑнусемпе килӗшӳллӗн пурӑнмалли пӳлӗмшӗн тата коммуналлӑ пулӑшусемшӗн уйӑхсерен паракан тӳлеве ҫак ҫӑмӑллӑха тивӗҫекенсене тата вӗсен ҫемье членӗсене шутласа параҫҫӗ.

Ҫакна палӑртмалла, федераллӑ ҫӑмӑллӑхсемпе усӑ куракансен уйрӑм категорийӗнчи ҫынсен ҫемье составӗ ҫинчен справка илсе килсе пама пултараҫҫӗ. Ҫак справкӑна тӑратсан, пурӑнмалли пӳлӗмшӗн тата коммуналлӑ пулӑшусемшӗн уйӑхсерен паракан тӳлеве ҫемье членӗсене шута илсе шутласа параҫҫӗ. Енчен те ку таранччен ҫак ҫӑмӑллӑха илсе тӑракансем ҫемьере миҫе ҫын иккенне кӑтартакан справкӑна тӑратмасҫӗ пулсан, уйӑхсерен паракан ҫав тӳлеве ҫӑмӑллӑха тивӗҫекене кӑна шутласа параҫҫӗ. Ун пек чухне унӑн сумми июлӗн 1-мӗшӗнченхи чухлех сыхланса юлать.

Кунта асилтерни вырӑнлӑ пулать пулӗ. Июлӗн 1-мӗшӗччен пурӑнмалли хваттершӗн тата коммуналлӑ пулӑшусемшӗн Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ инваличӗсем 605 тенкӗ, Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ участникӗсем 360 тенкӗ, инвалид ачасем 905 тенкӗ илсе тӑнӑ.

**– Светлана Леонидовна, ҫемье членӗсене шута илсе паракан уйӑхсерен паракан тӳлеве мӗн вӑхӑтлӑха палӑртаҫҫӗ?**

– Пурӑнмалли хваттершӗн тата коммуналлӑ пулӑшусемшӗн уйӑхсерен паракан тӳлеве ҫемье членӗсене шута илсе 6 уйӑхлӑха параҫҫӗ. Енчен те ҫак федераллӑ пулӑшупа усӑ куракан асӑннӑ ҫӑмӑллӑха палӑртнӑранпа 6 уйӑх иртнӗ хыҫҫӑн ҫемье составне ҫирӗплетекен справкӑна ҫӗнӗрен тӑратмасть пулсан, малалла вӑл ҫав ҫӑмӑллӑха хӑй кӑна тивӗҫет.

Енчен те каярахпа ҫак справкӑна тӑратрӗ пулсан, уйӑхсерен укҫан паракан тӳлеве, ҫемье членӗсене шута илсе, справка тӑратичченхи 6 уйӑха кӗртсе шутласа параҫҫӗ.

**– Июлӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа пурӑнмалли хваттершӗн тата коммуналлӑ пулӑшусемшӗн уйӑхсерен паракан тӳлев миҫе тенкӗпе танлашать?**

– «Ветерансем ҫинчен» саккунпа килӗшӳллӗн вӑрҫӑ инваличӗсем, инвалид пулса тӑнӑ Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ участникӗсем тата вӗсен ҫемье членӗсем, ҫавӑн пекех Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ участникӗсем, инвалиднӑ пур «Блокадӑри Ленинградра пурӑнакана» паллӑна илнисем, вилнӗ вӑрҫӑ участникӗсен ҫемье членӗсем 325-шер тенкӗ илсе тӑма пуҫларӗҫ.

**(Вӗҫӗ 2-мӗш стр.).**

Сывлӑх

## Грипп сыхланма хистет

Республикӑра грипп чирӗпе чирлессин тӗслӗхӗсем кӑшт сахалланма пуҫларӗҫ пулсан, пирӗн районта вара лару-тӑру хальлӗхе апла мар-ха.

Чӑваш Республикинчи Роспотребнадзор управленийӗн территори уйрӑмӗн тӗп специалист-эксперчӗ Г.Г. Воробьева пӗлтернӗ тӑрӑх, эрне пуҫламӑшӗ тӗлне районта грипта чирлекенсен шучӗ 431-пе танлашнӑ. Эрне маларах вара грипра чирлекен 254 ҫын медицина пулӑшӑвӗ ыйтнине палӑртнӑ. Апла пулсан районта грипп вирусӗ ҫынсене лӑпланма памасть-ха. Халӗ чирлекенсенчен 275-шӗ – 14 ҫула ҫитмен ачасем.

Ҫак лару-тӑрура пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан хӑш-пӗр шкулсене карантина хупнӑ. Паянхи кун тӗлне вӗсем ҫаксем: Сосновкӑри тата Атапайри пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан тӗп шкулсем, Нискассинчи, Йӳҫкассинчи тата Муркашри вӑтам шкулсем, Катькасри пуҫламӑш шкул-ача сачӗ. Иртнӗ эрнере чирлисем больницӑсене пулӑшу ыйтма пынине тишкерсен, малашне грипп чирӗпе чирлесси чакма кирлӗ.

Грипп вирусӗн H1/N1 тӗсӗпе районта 2 ҫын чирленине лаборатори тишкерӗвӗсем ҫирӗплетсе пачӗҫ. Пӗри, 1981 ҫулта ҫуралнӑскер, Мускавран таврӑннӑ хыҫҫӑн чирленине пӗлтернӗ. Вӑл халӗ Мӑн Сӗнтӗр больницинче сиплент. Унӑн сывлӑхне «вӑтам йывӑр» тесе палӑртнӑ. Тепри вара, 1995 ҫулта ҫуралнӑ хӗр ача, Шупашкарти больницӑра. Вӑл хальлӗхе хӑйне йывӑр туять-ха.

Апла пулсан пурин те асӑрханмалла. Халӑх медицинин сӗнӗвӗсемпе те, организма грипп вирусне хирӗҫ кӗрешме пулӑшакан препаратсемпе те усӑ курмалла.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Йыхрав

## Ноябрӗн 27-мӗшӗнче – 36-мӗш лару

Депутатсен районти Пухӑвӗн председателӗн 2009 ҫулхи ноябрӗн 20-мӗшӗнчи 37 № йышӑнӑвӗпе депутатсен районти Пухӑвӗн тӑваттӑмӗш созыври черетлӗ 36-мӗш ларӑвне 2009 ҫулхи ноябрӗн 27-мӗшӗнче район администрацийӗн ларусен залӗнче 10 сехетре пухма йышӑннӑ.

Кун йӗркине пӑхса тухма ҫак ыйтусене кӗртнӗ:

– Муркаш районӗн 2010 ҫулхи экономикӑпа социаллӑ аталанӑвӗн прогнозӗ ҫинчен.

– Муркаш районӗн 2010 ҫулхи бюджечӗ ҫинчен.

– Депутатсен районти Пухӑвӗн 2008 ҫулхи декабрӗн 5-мӗшӗнчи С-30/2 № «Муркаш районӗн 2009 ҫулхи бюджечӗ ҫинчен» йышӑнӑвне улшӑнусемпе хушусем кӗртесси ҫинчен.

– Пурӑнмалли ҫурт-йӗре тытса тӑнӑшӑн тата юсанӑшӑн тӳлемелли 2010 ҫулхи виҫесене палӑртасси ҫинчен.

– Муркаш районӗнче пурӑнакансен ӑшӑ энергийӗпе усӑ курассин нормативӗсем ҫинчен.

– Депутатсен районти Пухӑвӗн 2007 ҫулхи октябрӗн 25-мӗшӗнчи С-21/6 № «Раҫҫей Федерацийӗн тата Чӑваш Республикин налуксемпе тӳлевсем пирки калакан законодательствисемпе килӗшӳллӗн «Муркаш районӗнче налук йӗркелӗвне тивӗҫтерессипе ҫинчен» положение улшӑнусемпе хушусем кӗртесси ҫинчен.

– Депутатсен районти Пухӑвӗн 2009 ҫулхи декабрӗн 5-мӗшӗнчи С-30/5 № «Чӑваш Республикинчи Муркаш районӗн харпӑрлӑхӗнчи тата Чӑваш Республикинчи Муркаш районӗн территорийӗнчи ҫӗр участокӗсене арендӑна памалли йӗркене ҫирӗплетесси ҫинчен» йышӑнӑвне улшӑнусем кӗртесси ҫинчен.

– Депутатсен районти Пухӑвӗн 2009 ҫулхи апрелӗн 24-мӗшӗнчи С-32/16 № «Депутатсен районти Пухӑвӗн 2007 ҫулхи апрелӗн 20-мӗшӗнчи С-18/4 № «Чӑваш Республикин Муркаш районӗн муниципаллӑ харпӑрлӑхӗнчи пурлӑхпа усӑ курмалли йӗрке ҫинчен» йышӑнӑвне улшӑнусем кӗртесси ҫинчен» йышӑнӑвне улшӑнусемпе хушусем кӗртесси ҫинчен.

– Депутатсен районти Пухӑвӗн 2009 ҫулхи ноябрӗн 27-мӗшӗнчи С-29/2 № «Пӗчӗк тата вӑтам предпринимательство субъекчӗсене, пӗчӗк тата вӑтам предпринимательство субъекчӗсене пулӑшса тӑракан организацисене нумай вӑхӑтлӑха усӑ курма муниципаллӑ харпӑрлӑха памалли перечене ҫирӗплетесси ҫинчен» йышӑнӑвне улшӑнусем кӗртесси ҫинчен.

– Муркаш районӗн муниципаллӑ харпӑрлӑхне приватизацилемелли 2010 ҫулхи прогноз планӗ (программи) ҫинчен.

– Депутатсен районти Пухӑвӗн 2002 ҫулхи апрелӗн 19-мӗшӗнчи С-8/5 № «Чӑваш Республикинчи Муркаш районӗнчи муниципаллӑ харпӑрлӑха парассин йӗрки ҫинчен» йышӑнӑвне улшӑнусем кӗртесси ҫинчен.

Депутатсен районти Пухӑвӗн ларӑвне ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсене, предприятисемпе учрежденисен тата организацисен ертӳҫисене, район администрацийӗн пай тата управленисен пуҫлӑхӗсене, депутатсен районти Пухӑвӗ ҫумӗнчи ҫамрӑксен парламенчӗн представителӗсене чӗнеҫҫӗ.